# «...Мĕн пĕчĕкрен тĕпчевçĕ пулма ĕмĕтленнĕ»

**Çак кунсенче Чăваш Республикин ăслăлăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш Республикин патшалăх премийĕн лауреачĕ, филологи ăслăлăхĕсен докторĕ Георгий Федоров профессор 70 çул тултарчĕ. В.Родионов профессор ун пирки «литературоведени пĕлӳçисен карти пуçне кĕске вăхăтрах тăма пултарнă тишкерӳçĕ» тет. Паянхи кун Атăлпа Урал тăрăхĕнчи тĕпчевçĕсем те Г.Федоров идейисене, ăслăлăхри çитĕнĕвĕсене шута илсе хăйсен литература критикине аталантараççĕ.**



Георгий Федоров Çĕмĕрле районĕнчи Патаккассинче ĕçчен те сăпайлă çемьере çуралса ӳснĕ. Ачалăхĕ вăрçăпа тĕл килнĕ. Йывăр çак вăхăтра ашшĕпе амăшĕ, Иосиф Петровичпа Татьяна Андреевна, кунне-çĕрне пăхмасăр колхозра ĕçленĕ. Çапах тĕпренчĕкĕ валли ырă кăмăл та, ăшă сăмах та тупма вăй çитернĕ. Георгин пĕчĕклех тĕпчевçĕ пулас туртăм палăрнă. Шкулта сочинени çырнă чухне те произведени содержанине тишкернипе пĕрлех унти çитменлĕхсем çинче чарăнса тăнă. Хăш-пĕр чухне ăна куншăн вĕрентекенрен «лекнĕ» те, лешĕ «ытла шала кĕрсе ан кай» тесе асăрхаттарнă. Георгий вара: «Пысăклансанах хамăн мĕн çырас килет, çавна çыратăп», – тенĕ.

«Сăпайсăр пек курăнĕ те – мĕн пĕчĕкрен эпĕ тĕпчевçĕ пулма ĕмĕтленнĕ. Вĕсем маншăн Турă вырăнĕнчеччĕ. Хаçат-журналта, кĕнекере сăнĕсене тупса пăхма, вĕсен хайлавĕсене вулама кăмăллаттăм. Кăтра пуçлă, вичкĕн куçлă Хусанкай, сарлака çамкаллă, çӳçне айккинелле туранă Ухсай, куçлăх витĕр мана, айван ачана, çирĕппĕн сăнакан Сироткин... Пурте вĕсем сăваплă Шупашкарта пурăнаççĕ, сăвă-роман хайлаççĕ, илемлĕ сăмахлăха тишкереççĕ. Çăтмах пек туйăннă Шупашкар...» – çапла аса илет ачалăхри-çамрăклăхри ăнтăлăвĕ пирки Георгий Федоров.

Хутарти шкултан, унтан Канашри педагогика училищинчен вĕренсе тухать. Шупашкарти И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне пĕтернĕ хыççăн 1971–1974 çулсенче Георгий Иосифович республикăри ăслăлăхпа тĕпчев институтĕнче чăваш чĕлхе пĕлĕвĕн пайĕнче ĕçлет. Прозăпа поэзи хайлавĕсене тĕпчет, материал хыççăн материал калăплать. Вĕрентекен ĕçне кăмăллаканскер республикăн тĕрлĕ шкулĕнче вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет. Çирĕм çул хушши пĕлӳ парать вăл çамрăк ăрăва, Шупашкар районĕнчи Вăрман Çĕктер, Комсомольски районĕнчи Асанкасси шкулĕсенче вăй хурать. Шкулта ĕçлени ăна кайран учебниксем çырнă чухне нумай пулăшать. 10-11-мĕш классем Г.Федоров хатĕрленĕ учебниксемпе чылай çул ĕнтĕ вĕренеççĕ. Вăл учительсем валли те хăйĕн учебникĕсем тăрăх йĕркеленĕ вĕренӳпе меслетлĕх кĕнеки пĕрре кăна мар пичетлесе кăларчĕ.

Литература ăслăлăхĕн тĕнчи Г.Федоровăн «Художественный мир Федора Уяра» /1991/, «Художественный мир чувашской прозы» /1996/, «Сăнарлă сăмах ширавĕ» /1996/ тата сумлă ытти ĕçне аван пĕлет. Вĕсем чăваш литература ăслăлăхне çĕнĕлĕх нумай кĕртрĕç. Çак шухăша Виталий Родионов «Художественный мир Федора Уяра» кĕнеке пирки калани те çирĕплетет: «Унччен чăваш сăмахлăх тĕпчевĕнче *илемлĕ тĕнче* тесе калани тĕл пулсах каймастчĕ. Г.Федоров çак ăнлава кĕрекене лартрĕ кăна мар, вăл ăна пула çыравçăсен пултарулăх тĕшшине тупса палăртма пултарчĕ. Уйрăмах проза ăстисенне». Паянхи литература тĕпчевĕпе критики *илемлĕ тĕнче* ăнлавсăр пĕр утăм та тăвасшăн мар темелле. Г.Федоров тăрăшнипех чăваш ăслăлăхĕнче, унта кăна та мар, Атăлпа Урал хутлăхĕнчи халăхсен литературинче те, «нумай пăнчăлăх», «культура символĕ», «тĕрлĕ культурăсен диалогĕ», «автор художник», «художник сăнарĕ», «илемлĕ шухăшлав» тата ытти ăнлавсем ăслăлăх чĕлхин çаврăнăшĕн паха тĕслĕхĕсем пулса тăчĕç. Вăл паллă çыравçăсен Хветĕр Уярăн, Юрий Скворцовăн, Анатолий Емельяновăн, Илпек Микулайĕн тата ыттисен пултарулăх тĕшшине тупса халăх патне çитерчĕ. 2004 çулта литературовед ăсчахăн черетлĕ тĕпчевĕ – «Чăваш литератури /1945-1985 çулсем/» кĕнеки кун çути курчĕ. Ăна аслă шкулти студентсемпе шкулта чăваш литературине вĕрентекенсем валли хатĕрленĕ. Ăна кĕнекешĕн Чăваш Республикин патшалăх премине пачĕç. Çак чыса чăннипех тивĕçлĕ. Кĕнеке – чăваш литературин историйĕпе кăсăкланакан кашни çыншăн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Унта та чăваш литература ăслăлăхĕ халĕччен пĕлмен çĕнĕлĕх темĕн чухлех.

Георгий Иосифович паллă тĕпчевçĕ кăна мар, пултарулă çыравçă, поэт, кĕвĕ ăсти. 2002 çулта вулакансем унăн «Эх мăнтарăн хир мулкачĕ» повеçсен ярăмĕпе паллашрĕç. Вăл «Тăван Атăл» журналта кун çути курчĕ. Автор чăваш литературинче халĕччен пулман çĕнĕлĕхпе, *ытарлă эскиз* мелĕпе çырнă. Хайлав жанр тĕлĕшĕнчен кăна мар, çыру формипе стилĕ енчен те чăваш илемлĕ литературине чылай çĕнĕлĕх илсе килчĕ. Ăна вуласан тӳрех авторĕ ахаль çыравçă пулманни курăнать. Ку хайлаври çыру стилĕ, çыравçă алли хăйне евĕрлĕ пулнинче палăрать. Унăн пултарулăхĕн тепĕр енне – куçарура та палăрмаллах çитĕнӳ тунине те – аса илмеллех. Тутарпа пушкăрт çыравçисен нумай хайлавне чăвашла куçарса тăван халăх патне çитерчĕ.

Тĕпчевçĕ ăслăлăх ĕçне вĕрентӳ ĕçĕпе питĕ килĕшӳллĕ çыхăнтарса пырать, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче студентсене пĕлӳ парать. Чылай çул университетри культурологи кафедрине ертсе пычĕ. Георгий Иосифович, çур ĕмĕре яхăн ăслăлăх кăсăлăкĕнче вăй хунă май, çĕр-çĕр статьяпа вунвун кĕнеке çырчĕ, чылай çамрăка пурнăç çулне тупма, унпа шанчăклă утма вĕрентрĕ. Вăл ертсе пынипе вун икĕ аспирант кандидат, пĕр çын доктор диссертацийĕсене хӳтĕлерĕç. Г.Федоров – И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнчи икĕ диссертаци канашĕн членĕ. Георгий Иосифович пĕр кун та ĕçсĕр тăма пултараймасть. Хальхи вăхăтра чăваш фразеологийĕн ăнлантару словарьне йĕркелесе çитерес тесе тăрăшать. Тĕрĕссипе, ку çирĕм çул ытла пухнă калама çук паха /чĕлхеçĕсемпе литераторсемшĕн, вĕрентекенсемшĕн, студентсемшĕн/ материал тахçанах пичете хатĕр. Шел те, профессор ăна халĕччен те усă курас текенсем патне çитерме май тупаймасть. Кун пирки тăван сăмахлăхпа культурин аталанăвĕшĕн яваплисен çине тăрсах шухăшламалла.

Хисеплĕ юбиляра, Георгий Федорова, тăван халăхăмăрăн пуласлăхĕшĕн малалла та пархатарлă ĕçлесе пурăнма çирĕп сывлăх, иксĕлми вăйхал сунатпăр. Ĕмĕтĕр çитсе, тĕллевĕрсем пурнăçлансах пычăр, ĕçĕрсем пĕрин хыççăн тепри кун çути курччăр.

■ **Николай ОСИПОВ,**
**филологи наукисен кандидачĕ, ЧППУн чăваш литератури кафедрин доценчĕ**